Ава илĕр-ха хресченсем мĕне пурăннине. Патша чухнехи хресченсен пурнăçĕ çинчен Некрасов поет хăйĕн „Кому на Руси жить хорошо" йăтлă произведенинче пиллех те лайăх каласа панă. Тĕттĕмлĕх, выçлăх, пусмăрлăх тÿссе пурăннă патша тухнехи хресченсем.

Халĕ пирĕн совет çĕршывĕнчи хресченсем пуйăн та культурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Колхоз уйăхри рĕсенче вăйлă та пысăк машинсем ĕçлеççĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕ те тĕнчен улшăнса çĕнелчĕ. Чăваш халăкĕ коммунисен партинĕ йĕртсе пынине-пуçне тунă савăнăçлă та тулăх пурнăçпа пурăнать.

— Аса илĕр-ха ĕлĕк хĕрарăмсем мĕнле пурăннине,—тет Стешова йăлташ.—Пирĕн хĕрарăмсем нимĕнле права та пулман, пире çын вырăнне те шутламан. Епĕр паянхи пек ниçăн та савăнса курман.

Епĕ 45 çулта. Аччах хама вĕçĕмсĕр çамрăк тесе шутлатăп. Манăн икĕ хĕр аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Епĕ тулли пурнăçпа пурăнатăп. Шутлăр-ха хусемăрах, ĕлĕк пулсан, акă сирĕн умра ларакан Андрейева йăлташ пек хĕрарăм сакăн пек пулласси çинчен ĕмĕтлене пултăр-ăй-ва? Паллах, çук. Халĕ Андрейева йăл. Чăваш АССР Тĕнĕçтăвком председательĕ.

Сывă пултăр çывăхран та сывăх Сталинă! (алă çупаççĕ).

Трибунă умне Исайев стахановец тухать. Вăл патша чухнехи йăвăр пурнăç çинчен каласа парса ана халăхпе танлаштарса кăтартать. Телейлĕ пурнăç туса панăшăн коммунисен партинне чĕререн тав тăвать.

— Савăнăçлăран та савăнăçлă кун—çуллăн кунĕ çывхарса килет. Ку кун епĕр хамăра мăн пурнăç паракансемшĕн сасăлатпăр. Манăн пирвайхи сасă Сталин йăлташшăн пулать.

Исайев хыççăн финанс активĕ йăвĕпе Новикова йăлташ тухса каларĕ. Вăл çуллăн кунĕ тĕлне хăйсен планне тултарса малти вырăнтах пулма обязательстваллă илчĕ.

Пуху Сталин йăлташ патне саламлă сыру йама йышăнчĕ.

Пуху хыççăн пысăк концерт пулчĕ.

Тавтапуç Сталин йăлташа!

Ĕлĕк епĕ начар пурăннă. Тăхăнмали, çимели ситмен. Ураран çĕпата тухман. Пĕр татăк çăкăршăн кулак патĕнче ĕçленĕ. Хăш чухне ĕçсĕр те нумай çапкаланса çÿренĕ.

Пире, хĕрарăмсене, Аслă Октабĕр революцци кăна ирĕк пачĕ. Ĕлĕк вулама, çырма, вырăсла калаçма пĕлмен. Халĕ епĕ вĕрентĕм ĕнтĕ.

Епĕ хĕрĕх çула çитсен Вăрмарти нăмăш спорт хатĕрĕсем тăвакан фабрикăна ĕçлеме кĕтĕм. Çĕнĕ фабрикă. Ĕçсем малтанхи вăхăтра чаплах марăчĕ. Нормăсене те тултарса пыраймастăмăр. Пурнăç улшăнат. Техникăна алла çăварса илтĕмĕр. Епĕ халь нормăна йăланах 150—200 процент тултаратăп. 1935 çултан стахановецсен ретĕнче тăратăп.

Тавтапуç Сталин йăлташа пире çакăн пек лайăх пурнăç туса панăшăн!

Е. Федотова.

Халăх учителĕсен пурнăçĕ лайăхланса пырать

Пирĕн коммунисла партинпе совет правительстви халăх учителĕсен пурнăç условисене лайăхлатасеншĕн хыттă тăрăшаççĕ. Пĕр-ик çул кайăрах учителсем уйăхне вăтăмран 150—200 тенкĕ ĕçукçи илнĕ пулсан, халь вĕсем 300—400 тенкĕ илеççĕ. Учителсем валăри хватерсем çителĕклĕ туса панă.

Пуçламăшне вăтам шкул работникĕсен профессиле союзĕн обкомĕ 1937 çулта 699 учителе канмали çуртсене, 514 учителе Атăл леш-ĕнчи канмали çурта, 137 учителе вырăнти санаторисене, 381 учителе екскурсисене, 135 учителе инçетри курорттсене ĕнтĕ.

Совет Союзĕнче—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисене çăлăнăç çулне катартса тăракан çута майак. Вăл—пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен социалисăмла тăван çĕршывĕ.

Фашисла тискер кайăксем работочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрĕмĕш социалисăмла государствин çине вăрçăна тапăнма хĕрсех хăтĕрленеççĕ. ССР Союзĕн хăватне шалтан хавшатас тесе, вĕсем пиĕн пата шпионсем, диверсантсем нумай йăраççĕ. Вĕсем хăйсен усăлă ĕçĕсене тума троцкисла-бухаринла-зиновьевла-рыковла тата ытти çĕлен-калтасемне те усă кураççĕ.

Сталин йăлташ, партин Ленинла—Сталинла Тĕп Комитечĕ çирĕп йĕртсе пынине, пирĕн партин халăхăн тăшманĕсене, фашиссене тата кĕрĕшне вилĕ хут ылхăнла ирсĕрсене тăрă шыв çине каларса çĕмĕрсе такрĕ. Сталинла Нарком Ежов йăлташ йĕртсе пыракан мухтавла наркомвнуделлăçсем шпионсен, саботăрçисен нумай йăвисене тупса кăкласа пăрахрĕç. Анчах, манма йурамасăр, Совет Союзĕ çине тăнăма план хыççăн план туса, фашиссем пирĕн пата шпионсемпе диверсантсене йăрсах тăраççĕ.

Савна асра тытса, революцци сăхлăха ÿстерсех пырар, хамăр хушăра политикăла тимсĕрлĕхе цĕтерер, халăхăн пур тăшманĕсене те тупса тытса тĕпе-тăмăрне кăкласа пĕтерер, тăван çĕршывăн оборона хăватне тĕрлелетер, хамăран ĕрттĕсене Ленин—Сталин партийĕпе Совет правительстви тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йăлташ тавра тата тачăрах пĕтĕстерер!

Епĕр Мускавпа пĕрле йурлатпăр

Шупашкар. Нойабĕрĕн 7-мĕш. Хĕрлĕ площадь:

Испанири çуламăлă республикăпа çăмăл, аслă Китай çарĕн паттăр салтакĕсем, Çурçĕр полуçĕвне ĕçлекен Пăнанти, Кренкел, Ширшов, Федоров йăлташсем, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи погранничниксем, Туркестан, Узбекистан, Казахстан, Киргизи, Грузи, Армени, Азербайджан колхозникĕсем, Донбасри стахановецсем—пĕтĕм халăх, пĕтĕм тĕнче, мĕн пур прогрессивлă етемлĕх пайăн,—Аслă Октабĕр кунĕпе, тĕнчери аслă столицăна—Мускавна пĕрле йурласçĕ.

Епĕр хĕрлĕ йăлансемпе урама тухрăмăр. Кĕрĕх ирĕклĕ çын пирĕн йăлансене çулăм лекĕ вăрăнтаратăр. Сывăлăпа йăнăраса тăракан йурă хул-çурăма çĕклет, какăр вĕри кăмăлна тулăт. Епĕр Хĕрлĕ площадьре тăратпăр. Вăхăт пиллĕк сехет çите пуçларĕ.

Пĕтĕм Шупашкар урамĕсем халăхпа тулчĕç. Чăвăл ÿăна сывăхри йăлансенче çулăм лек вăрăнтаратăр. Сывăлăпа йăнăраса кăтартакан колхозниксем, вĕренекенсем йăмăк киленĕç. Хула нихăçанхи пек мар канăр тумланнă.

Митинга ПСК(б) Партин Шупашкар хулинчи комитечĕн секретарĕ Смирнов йăлташ ÿçрĕ.

Митинга парти Чăваш Обкомĕн тата Чăваш правительстви ĕнчĕпе ЧАССР Тĕнĕçтăвкомĕн председательĕ З. А. Андрейева йăлташ, комсомол Чăваш Обкомĕн ĕнчĕпе обкомол секретарĕ Никифоров йăлташ, Шупашкарти студенчесла пăлхăлне Коммунисла аслă пăхăççăлăх-шкулĕнче вĕренекен студент-орденоносец-Табаков йăлташ тухса хĕрлĕ сăмахсем калаçрĕç.

—Ĕлĕкхи помещиксемпе капиталлисем çаманинче çăлăнăç халăхăн йăнăр хурлăхра, выçлăхра, тĕттĕмлĕхре пурăннă. Вăл хăйĕн хуçалăхне, культурине аталантарма пултарайманран, ăна тискер самана тантăша пусарса пынă. Капиталлисем хуçа пулса тăракан çĕршывĕнче халĕ те савăн пекех. Акă илĕр-Китай çĕршывне. Вăл ĕлĕк авал хĕвелтухăçĕнче чи культурлă çĕршыв пулнă. Инçетри Хĕвелтухăçĕн малтанхи культурин Китайра çуралнă. Халăхи вăхăта пасен, Китай, тискер мăхăçĕсен ăмăртăн-ăмăрне тантăша пынă пирки, кайа йулакан çĕршыв пулса тăчĕ.

Çавăн пекех тискер кайăксем—фашиссем Испани халăхне пусмăрла хăварасшăн: Фашиссем хăйсен пулăа аттисемпе тантăша етемлĕхĕн ăмĕрхи культурине шиесçĕç.

Епĕр иртĕрĕ совет халăхĕсем ăна пур тăшмансене сăмăрсе пырса, хамăран пур пăнăçа, хамăран культурăна вăйлăн ÿстерĕпĕр. Пирĕн Чăваш республикĕ Совет Союзĕн Аслă семйинче пуйăн та культурлă, чеченлĕхенлĕ республикă пулса тăчĕ.

Пирĕн мĕн пур ситĕнÿсем аслă Сталин йăлташ йăнăне сыхăнса тăрасçĕç. Палан епĕр Аслă Октабĕрĕн XX-мĕш çулăвĕнче малтан аслă çулпуçне Сталин йăлташа тавтăпăтăпăр!—тесе каларĕ Андрейева йăлташ хăйĕн сăмахĕнче.

—Социалисăмла совет стройĕ пирĕн çĕршывăри çамрăк ăру вăл пĕтĕм пурнăç куçĕнче усса пачĕ,—тет Никифоров йăлташ.

Пирĕн çĕршывра капиталлисемпе вĕмешниксем çук, експлоатаци çук, безработица çук, пусмăрăлăна чуралăх çук.

Совет çĕршывĕн çамрăк çынни пурнăçа кĕнĕ чух асанлă, тискер чăмăрвăсем тĕлне пулмасăр. Вăл ĕçлеп, кану, вĕренÿ прависемпе тулăнни усă курать.

Каçхи ирĕклĕн вĕренме, малала кайма пултарать. Каçхи вĕренсе инженер, врач, ăслăчăк, таçлăкет, моторист, астроном, агроном, учитель тата ытти-те пулма пултарать.

Всĕ çĕршывăпăн лайăх ĕçлетĕн пулсан—всĕ хисеплĕ, всĕ çĕршывăн чапла çынни, саппăн пур çĕрте те çул уçă.

Кам паян пире çак телейлĕ пурнăçа? Ана пире большевиксем аслă партинĕ паян, ăна паян пире Ленинпа Сталин.

Илошшед тăрăх урра кĕрлет, „Интернационал" йăнăраса кайать.

Орденоносец Табаков йăлташ хăйĕн сăмахĕнче-чăваш йăлĕ, йăхăçăлăхĕ çак çирĕм çул хушшинче мĕнле ÿсĕмсем тунине катартса панă.

Митинг хыççăн Шупашкар ĕçсыннисен аслă демонстрацийĕ пулса иртрĕ. Шупашкар йурăрисем тата Мускав йурăрисемне пĕрлешсе, пĕр йурă пулса тăчĕç.

Каçхине хула урамĕсем илемлĕ сутăсемпе йалтăртатса суталичĕç. Кренкелăн йăнăне тăракан сатран кĕрхи тĕксĕм тÿнне фейерверкăн кăвак та симĕс хăмăсем сирпĕнеççĕ.

Пур енчен те музыка кĕрлет. Çамрăксем сатра, урам варринче ташлаççĕ. Çамрăксемне сăхлăлă ватти-сем хутшăнса кайаççĕ. Вунă ĕçсĕр—тĕлелĕ, стадион йăнăчĕн çулăмлă фĕкĕçĕм тытăлă çамрăк ĕçĕ-пăста çити тăсăлакан строй йышăнаççĕ, пуçлаççĕ. Хула тата мăнăрах сутăлчĕ.

Тулли савăнăç, сыпăнсăр хавалăх! Аванăçлă пурăнма пирĕн совет çĕршывĕнче!

Арк. Ĕçхĕл.

Агитатăрсем хатĕр

ТРАК. Районта 33 çуйлав участки тувă. Каçхи участкăра 5—7-çынтан агитколлектив организацилене. Районра пĕтĕмпе 180 агитатăр ĕçлет, вĕсене пурне те парти райкомĕнче тĕрĕслесе çирĕплетнĕ. Шупашкарти 10 кунлă курсран 28 агитатăр, район центрĕнчи 5 кунлă курсран 29 агитатăр вĕрентĕçе кăларĕç.

Çак курссенчен вĕренсе тухнă агитатăрсем çуйлав участкисенче агитколлективсене йĕртсе пынă пултараççĕ.

Сталинла Конституцине çуйлав саккунĕ çинчен массăсене ăнлантарса парасси çав тери ответлă та пархатарлă ĕç. Çавăнпа та агитатăрта ĕçлекен çын—хăйĕн пĕтĕм чунĕ-чĕрине коммунисла партишĕн тăрăшакан çын пулмала. Агитатăрсен ретне политикă йĕнчен шанчăксăр етемсене çыхăха та йăмала мар. Акă Мăн-Шетмĕ участкинчен районти курса Никифоров „агитатăр" лекнĕ. Вăл курсантсем хушшинче совета хирĕçле сăмахсем сарнă, столовăйăнче хулиганла ĕçсем тунă. Агитатăрсен пухăвĕ Никифорова курсран кăларса йăвĕ.

Закамский.

Пурнăç чечекĕсем

Ир-ирех Шупашкар хулин урамĕсем шавлама тытăнаççĕ. Машинăсем чупаççĕ. Сынсем утаççĕ. Хăшĕпĕрисем ĕçлеме, теприсем вĕренме васкаççĕ. Хĕрарăмсем ачисене сăвăтса ача сачĕсене йсатса хăваракаççĕ.

Пĕчĕк ачасем амăшсемсĕр килтĕ йĕрсе лармаççĕ. Вĕсем ертелле пĕрле пухăнса таса та çутă çуртсенче—ача сачĕсенче хăйсен кунĕсене иртереççĕ. Вĕсем унта тутлă çимĕçсĕ, выльăççĕ-куласçĕ, вĕренеççĕ.

Ачасен пурнăçĕ кунран кун лайăхланат. Ача сачĕсене çÿрекенсем йышĕ ÿссех пырать. Пĕлтĕр ача сачĕсене 470 ача çÿренĕ, кăçал—860 ача. Хулара 11 ача сачĕ ĕçлет. Асăлă Октабĕр праçникĕ тĕлне çĕнĕ-рен 2 сад уçиĕ. Ку çуртсене йăтăрласа тунă. Пĕри Калинин йăвĕпе тăракан урамра 75 ача валăри, йăвăç çурт. Теприйĕ—Автономнăя урамра, 100 ача валăри, икĕ хутлă чул çурт. Ку çурта тума 245 пин тенкĕ уçса тухнă. Çак кунсенче, Асăлă Октабĕр революцци пулăпăрăнта ача амăш-ăрăпăрăм 20 çул хушши ирĕкре пурăннă йăтпа çĕнĕрен ача сачĕ валăри çурт тума тытăнаççĕ. Ун валăри 240 пин тенкĕ уйăрса хунă.

10-мĕш номĕрлĕ ача сачĕ. Сада 81 ача çÿрет. 3 группăлă.

Асăлă группăлă. Йĕри-тавра картинăсем çакăнса тăраççĕ. Йĕшĕл чечекĕсем сарăлса лараççĕ. Пианинăпа Хăшпĕр ачасем унпа выдăма-тăма пĕлеççĕ. Группăпа пилĕк кунта пĕрре музыка заньятийĕ пулать. Ку тĕлĕпĕне уйăрăм учитĕл пур. Пианинăпа çинче Сталин бюсчĕ ларать.

Ачасем сада кăмăллăн çÿреççĕ. Вĕсене сад пурнăçĕ килешет. Пысăнах ирхи апат çийĕччен хăйсем тĕллĕн выльăççĕ. Строительствă материалсем нумай. Вĕсем унтан тĕрлĕрен çуртсем, заводсем тăваççĕ. Кайран пĕр сехет хушши вĕренеççĕ. Саспаллисемпе паллашаççĕ. Халĕ вĕсем 3 саспалли вĕренĕ ĕнтĕ. Картинкăсем ÿкереççĕ. Хăш чухне тата руководительницă кĕнекесем çинчен ăухмасем вуласа парать. Группăн хăйĕн библиотекă пур. Унта 240 ача-пăча кĕнеки. Пĕрречен çавăн пек „Мурзилка" журнал çинчен руководительницă пĕр ача садĕнчи ачасем йепле Испани ачисем патне ÿкçа йăни çинчен вуласа панă. Владик Спиридонов çакна хытă итлесе ларнă. Çавăн хыççăн вăл никама систермесĕр пăртакшăрăн ÿкçа пухса пынă. Чылай вăхăт иртсен Владик руководительницăн патне 2 тенкĕ те 40 пус ÿкçа илсе пынă та çапла калана: „Епĕ Испани ачисем патне йăма кучченеç—ÿкçа илсе килтĕм. Вĕсене епĕ хĕрхенетĕп. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсене фашиссем вĕлереççĕ" тенĕ. Куна курсан ытти ачасем те ÿкçа илсе пынă пуçланă. Вĕсем 7—8 çулта кăна пулин те фашиссен тискер ĕçĕсене те туртса илет, культурăн чи хаклă йăнăлисене те пĕтерет. Фашисăм, чи малтан Германири, Италири тата Японири фашисăм, империалисăмла çĕнĕ вăрçа хатĕрленет çеç мар, вăрçа вăрçат те ĕнтĕ.

Çакăн пек условисене тĕрлĕ тĕнчери халăхсем—тата чи лайăх çынсем ССР Союзĕ çине, пĕтĕм тĕнчери мирлĕ самаран хăвармăш тĕрекĕ, социалисăмла цивилизацине прогресăн çĕршывне çине, пысăк шанчăк хураççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Октабĕрти Социалисăмла революцци çирĕм çул тултарнине ССР Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери халăхсем, буржуаль демократине культурăн чи лайăх представителĕсем те уйăвлаççĕ.

Вуннăр мĕлйун пролетарисем тата колонисенчи пусмăрти халăхсем капиталисăм чуралăхĕнчен, империалисăм пусмăрĕнченех, хăталассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем капиталисăма тарăхни ÿссех пырать. Революцци çулпа пырсан çеç çулăхран, асапран хăтăлма пуррине, бурмуçăн власне çавăрса çапсан тин çăлăнăç пулассине йышлăрах та йышлăрах массăсем ăнланса пыраççĕ. „Массăсен ăнланăвĕнне штурăм идейе çитĕнсе пырат" (Сталин). Испанире Китай паттăр халăхĕсем фашисăмăн тата империалисăмăн хăйăр вăйăсемне тытăçсах çапаçаççĕ. Франципе халăхăн тĕрекле пĕрлĕх фрончĕ фашисăмăн тапăнăвĕсене, фашисăм влаçа илесшĕн çунса тапăнăнисене, анаçăлăн çапса ывăтать. Чылай çĕршывсенче массăсем фашисăма хирĕç пĕрлĕх фрончĕ тăвас турăмĕ вăйланса пырать.

Çуйлав кунне çĕнĕ чукунçулпе парнелер

Çирĕмлĕк кун кайăкăн участкăра хĕрсе ĕçленĕ вăхăтрах ман-пата начальник пычĕ те:

— Сана Мускавра та пĕлеççĕ. Акă чукунçула строительствин Тĕп Управленийăн начальникĕ Друйан йăлташ сан пата телеграммă йанă. Вĕсем есĕ тата та пысăк çуйлавра тухассине тĕлĕкпе те курас çук. Халĕ манăн ĕçсем çинчен çĕршывăн аслă управленине пĕлеççĕ. Мана чысласçĕ, пулăшаççĕ. Ещĕ халĕ тĕттĕм, ним пĕлмен çын мар. Кăçал колхозра ĕçлесе тулă 400 ĕçкуçă çине илнĕ тырнул тата чукунçул строительствине ĕçлесе илнĕ ÿкçа мана тулăх пурнăçпа пурăнма та, тумланма та, ачасене вĕренме те çитет.

Манăн тулли пурнăç—пĕтĕм çынтен çĕршывĕнчи ĕçлакăçĕн пурнăçĕ. Епĕ чукунçул çинче ĕçлесе тунă ĕçĕмсем çинчен каланă темиçе çĕр колхозникăн ĕçĕсем çинчен каланă пулат.

Аччах мана чукунçул строительстви вăрăма чăкланă кÿрентерет. Кунашкал пулни пирĕншĕн, колхозникĕсемшĕн интĕс те килĕштерĕр. Чăтма çук кăна.

Акă сывăлăçăлă уйăх—çуйлав-кунĕ сывхарса килет. Епĕ çуйлав кунĕ çĕлне чукунçула туса пĕтерессипе кĕрешĕпĕ çĕрĕ пĕтĕм пултарулăха паратăп. Анчах манăн сăмăна сăлма калас килет: колхозникăн, лайăр пурте пĕр харăсăн çуйлав кунне çĕнĕ чукунçула туса пĕтерипине парнелессишĕн кĕрешĕпĕ тухăр!

И. Тарасов.

Патăрьел районĕнчи „Правда" колхоз членĕ — чукунçул строительствинчи стахановец.

ЧĂВАШ КОММУНЕ

Мускаври стахановецсем йутçĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацийĕсемпе тĕлпулни

М. И. Калинин йулташ сăмах тухса каланă

Союзсен çурчĕн Колоннăй залĕнче, нойабĕрĕн 9-мĕшĕнче, Мускаври предприйатисенчи профработниксем тата стахановецсем йутçĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацийĕсемпе тĕл пулнă. Тĕлпулу Октябрьти Социализăмăла Аслă революцин çирĕм çул тултарнă йăтпа пулнă.

Колоннăй залра туллийех халăх: Президиумра Шверник, Лозовски, Москатов, Николайева йулташсем тата Мускава Октябрь революцин çирĕм çул тултарнине уйăрлама килнĕ делегацисем представительĕсем. Вĕсен хисепĕнче геройла Испани халăхĕн представительĕсем—Рамон Гонзалес Пенйа тата Томас Наварро, Англири профессионаллă йухăмăн ча вата представительĕ—Том Мани.

Хисепле президиума, тăвăллăн алă çупса тата „ура" кăшкăрса, Сталин йулташа, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн политбюроне, çавăн пекех тата Теăман. Димитров, Хозе Диас, Долорес Ибаррури йулташсене суйлаççĕ.

Октябрьти Социализăмăла Аслă революцин пĕтĕм тĕнчелĕ пахалăхĕ çинчен Лозовски йулташ доклад туса парать.

Вăл доклад туна вăхăтра президиума М. И. Калинин йулташ тухать. Ана йумайччен хĕрлĕлĕ алă çупса кĕтсе илеççĕ.

М. И. Калинин йулташ сăмах тухса каласа, йутçĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацийĕсенчен саламланă. Калинин йулташ сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ, вăл каланă хушăра темиçе хут та алă çупнă.

Испаниран, Францири, Англирен, Чехословакирен килнĕ тата ытти нумай делегацисем Совет Союзĕнчи халăхсене саламланă. Вĕсем Совет Союзĕнчи халăхсене парнеçем панă—фильм, аъбомсем, йутçĕршывсенчи пролетарисем çĕршер пин çын алă пуснă „ылтăн кĕмĕкесем".

(ТАСС).

Районра йалхуçалăх выставки пулса иртрĕ

Нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче Шăнкăртам районĕнче йалхуçалăх выставки пулчĕ. Выставкăна районри пур колхозсем те тĕрлĕрен. паха експонатсем илсе килчĕç. Палла експонатсенчен—тулă, сĕлĕ, кантăр, чĕкĕтĕр, кавĕн; выльăх-чĕрлĕхсенчен—лашасем, сурăхсем, сыснасем тата ытти те. Пур експонатсем те кăсалăн çул вăйлă тырпул туса илнине катартса параççĕ.

„Красный Октябрь" колхозра тулă гектартан 34 центнер тухнă. „Сталь" колхозра пĕр гектартан 1094 центнер чĕкĕтĕр пуçтарса илнĕ.

Выставкăна пур колхозсенчен те стахановецсем, ударниксем нумай пуханнĕç. Курма пынă сыснесене стахановецсем хăйсен ертĕм çинчен каласа панĕç. Килес çулхи вăйлă тырпулăн кĕрешмели майсене катартса хăварчĕç.

Кужиков.

□□□

45 çын значокпе илнĕ

Çĕмĕрлери „Труженик" артел çумĕнчи физкультура кружокĕнче 64 çын тăрать. Октябрь праçникĕ умĕн вĕсенчен 14 çын ворошилăвла тĕл перекенсен значокне, 31 çын ГТО значокне илнĕ.





Бойарсемпе купцасен Мускавĕнчен—социалисăмлă Мускав.

ÝКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайра—Мускаври Кремĕл стени çумĕнчи пăр ту çăварни ернинче (Деďабарт гравюринчен тунă репродукци. 18-мĕш ĕмĕр). Сылтăмра—çав вырăнта ÿссе ларнă Манеж урамĕ (1937 çулхи ÿкерчĕк).

Доренски фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Уйăп Мишши

ĔМĔРСЕН ĔМĔЧĔ

Шăранса çĕкленет йурă ман чĕремре,
Чапла ĕмĕр çинчен чаплă йурăм пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек ĕмĕре,
Çук, кун пек çынсене никĕсĕ ĕмĕр курман.

Ĕлĕкрен, авалтан, миçе ĕмĕр тăршши
Хĕн курман ĕççинни пусмăрта асапра?
Халăхсен, тĕрми пулнă унчух çак çĕршыв,
Йунпала куçсуне сăрхăитарнă. тăпра.

Çут Октябĕр хайăр вутлă тăвăл пулса
Ĕмĕрхи пусмăра ишсе тăкрĕ тĕпрен.
Çĕршыв çийĕн çекленчĕ хĕвел çутăлса,
Ирĕк пурнăç хĕвелĕ çекленчĕ хитрĕн!

Ирĕк халăхсем тăчĕç, чăн-чăн хуçалла,
Улăштарчĕç тĕпрен çĕнетсе çĕр питне.
Çĕршывра йумахри пек тĕнче уçăлать.
Пурнăçларĕ çĕршыв ĕмĕрсен ĕмĕтне.

Çĕршывра йумахри пек ÿсеç паттăрсем,
Анаç тинĕс тĕпне, çĕкленеç пĕлĕте.
Тупалаç тусене. Йепле хаçăр вĕсем!
Пурнăç, пурнăç! Вĕрет пур çĕрте, пур тĕлте.

Кĕрлеç мăн хуласем. Тулли пурнăç йĕлта.
Сухалана епир чухăнлăх йăранне.
Хирсем тинĕс пек аслă. Туйанăр йăлтах—
Кăкрине ÿсса хучĕ пуйан çĕр—анне.

Йăвăр пулчĕç çулсем. Йăвăр пулĕç татах
Сывхарса килекен хайăр çапăçусем.
Анчах пирĕн çула çуг хĕвел çутатать,
Аслă Ленинпа Сталин—пирĕн çулпуççем.

Аслă Ленин! Вăл йат илтĕнет вĕççĕрех,
Аслă Ленин! Йалан асидетпĕр ăна.
Вăл пурнăт пирĕн чаплă, мухтавлă ĕçре.
Вăл кашнин чĕринче, асĕнче пурăнать.

Аслă Сталин, çулпуçăмăр! Санăн йатна
Йалав пек çĕкленсе йÿрра хуна çынсем.

Чи хĕрÿ йуратупала санăн патна
Турттăнаççĕ йалан пирĕн савăк чунсем.

Аслă тупăк умне тăрса пирĕн йатна
Тупа турăн ес аслă çулпуç умĕнче.
Халиччен хавшанса курман вăйхăватна
Ес çул тытăран хайăр тăвăлсем хумĕнче.

Йепле урчĕ тăшман! Тăчĕ хĕçпăшалпа,
Йе çĕлен пек айран турĕ ирсĕр ĕçне.
Халиччен усăнса курман хурçă алпа
Çапса çĕмĕртĕн ес ун-ылханлă пуçне.

Пĕр çын пек сан тавра чăмăртанчĕ çĕршыв.
Вăл халăчен çын курман çĕнтерÿсем тăвать.
Йут çĕрĕ хапăнмастăр пĕр утăм, пĕр шит,
Хамăр çĕршĕн тăма пирĕн çиге хăват.

Халăха халаллăран ес ылттăн саккун.
Унта пирĕн телей, пирĕн ирĕк, тивлет.
Çавăнпа халăхсем савăнаççĕ çак кун,
Йурăсен йуррине ман çĕршыв кĕвĕлет.

Çавăнпа шăранат йурă ман чĕремре,
Чаплă ĕмĕр çинчен чаплă йурăм пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек ĕмĕре,
Çук, кун пек çынсене никĕсĕ ĕмĕр курман!

Йух ес, йурă пайан, усăрах йанăра!
Ес тултар ман мухтавлă çĕршыв сывлăшне.
Пирĕн савăнăç, пирĕн хастарлăх санра,
Йурра хунă кашни пайан хăй пурнăçне.

Сиçĕр, сиçĕр питсем çутăрах! Ир çинче
Хĕвел кулăпа пек кулăр пур качча-хĕрсем!
Чаплă ирĕк, хĕвеллĕ Совет çĕрĕнче
Чи телейлĕ иртес пирĕн кунăмăрсем!

Аслă Сталин, çулпуçăмăр! Санăн йатна
Йалав пек çĕкленсе саламлаççĕ çынсем.
Чи хĕрÿ йуратупала санăн патна
Турттăнаççĕ çак кун пирĕн савăк чунсем!

В. И. Ленинăн 1917 çулхи произведенисен виçĕ томникĕ

Октябрьти Социализăмла Аслă революцин çирĕм çул тултарнă йăтпа ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн парти издательстви Маркс—Энгельс—Ленин институчĕ пухса хатĕрленĕ Ленинăн 1917 çулхи сочиненисен виçĕтомникне пичетлесе кăларнă.

Виçĕтомникре Ленинăн произведенийĕсене „Сочинений" тата „Ленинские сборники" иккĕмĕш изданине кĕнисене, тата çавнашкалах хăçат-журналсем çинче пичетленнисене пĕтĕмпе пекех кĕртнĕ. Виçĕтомник Ленин Швейцарире Российăри революцин çинчен пĕрремĕш хыпар илнĕ вăхăтран, 1917 çулхи мартран пуçласа 1918 çулхи йăнварччен вăхăта çавăрса илет.

Изданине лайăх йĕркеленĕ. Виçĕтомник тиражĕ 100 пин экземпăр. Кашни томăн хакĕ—5 тенкĕ.

(ТАСС).

О. Т. Харитонова йулташа Националăхăссен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Патăрйел Округ суйлав комисçи членĕнчен хăтарасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Общественăлă организацин тата ĕççынннисен общественисем О. Т. Харитонова йулташа Патăрйел Суйлав Округĕнчен № 502, Национальăссен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă пирки—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнать:

Ольга Тихоновна Харитонова йулташа Национальăссен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Патăрйел Округ Суйлав комисçи членĕнчен хăтарас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
З. АНДРЕЙЕВА.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ
Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар хули, 1937 çул, нойабĕрĕн 3-мĕшĕ.

Пулни-иртнисем

Арăмне вĕлернĕ. Çак кунсенче чиксе вĕлернĕ. Преступникне арестленĕ, ĕçе пăхса тухма халăх судне панă.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Колхоз правленийĕсем пулăшмаççĕ

Шĕнерпуç йалсоветне (Шупашкар р.) кĕрекен колхозсенче Конституцине тата „ССР Союзăн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренес ĕçе йĕркелесе йăвăç. Йалсоветĕнче пурĕ 14 кружок. „Çиçĕм" колхозра 4, „Кормилец" колхозра 5,, XI лет Октября" колхозра 5 кружок организациленĕ. Кашни участкăрах кружок пур. Кружокселе пурĕ 554 çын вĕренет. Ку тарифчен виçшер заньати туса иртернĕ.

Вĕренес ĕçре Чăвашсен Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнче вĕренекен студентсем нумай пулăшаççĕ. Вĕсем кампали кунсенче килсе, кружокселе суйлав сакунĕ çинчен йăлантарса парааççĕ. Анчах колхоз правленийĕсем çак ĕçе тивĕçлипех хаклама вĕрентеç ситмен-ха. „Кормилец" колхоз правленийĕ кружокселе ĕçлеме—заньатисем иртерме пулĕмсем тупса памаст. „Çиçĕм" колхоз правленийĕ лампăна краçин хатĕрлесе памаст.

А. Тимофейев.

Спартак общественчĕ

„Спартак" спорт общчествин хĕллеле хатĕрленнĕ май 30 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен спорт инвентарĕсем илсе килнĕ.

Общественăлă çумĕнче мотоциклетпа çуреме вĕренмели кружок уçăлнă. „Спартак" членĕсем унта 18 çын çуреççĕ. Халĕ 4 хутчен заньати туса ирттернĕ. „Спартак" общественвин хăйĕн 2 мотоциклет пур.

Кружокран йăнварĕн 1-мĕшне вĕренсе тухаççĕ.

Общественăлă декабрь уйăхĕнче тĕрлĕрен гимнастикă йăмăртăвĕсем ирттерме хатĕрленет. Декабрĕн 12-мĕшĕнче—ССР Союзăн Аслă Советне суйлана çул, йĕлтĕрпе йăранмали станци уçăлать.

Телейлĕ семье

Федот Никифоров Канаш районĕнчи „Çĕнĕ çул" колхоз членĕ. Унăн çичĕ ача. Хăйĕн çемйине сăвăнса кăна пурăнаť вăл. Пурăç çитеплеклĕ. Килĕ-çурчĕ лайăх. Халĕ вăл нумай ачалă семйесен шучĕне государствăран 2 пин тенкĕ пулăшу укçи илчĕ.

Совет влаçĕ ачасене йуратать. Вĕсене лайăх пăхса ÿстерес ÿсăла çынсем тума тăрăшать. Патша чухне пулнă пулсан, манăн ачасем хуть тăç çакса йал тăрăх ыйтакласа çÿрекенсем çеç пулнă пулĕччĕç. Халĕ вĕсем тулăх пурнăçра ÿсеççĕ, вĕренеççĕ,—тет Ф. Никифоров. Чăнах та Ф. Никифоров ĕлĕк кулаксем патĕнче ĕçлесе пурăннă. Çулла кĕтÿ кĕтнĕ.

Ф. Никифоров ачисем хаç пурте шкулта вĕренеççĕ.

Унăн семйи кăçал колхозра 1.099 ĕçкунĕ тунă. Çапла вара вĕсем 400 пăт тĕштырă илеççĕ. Ив. Малов.

Вăрман хатĕрлевĕ

Мĕншĕн икĕпитленеççĕ

Чернореченскăри автотрактăр бази вăрман хатĕрлев сезонне халĕ те хатĕрленсе ситмен. Базăри 12 автомашинăран 2 машина çеç йысавала, ыттисене пурне те йысамала. Васильев шофĕрăн машинĕ ремонтран октябрĕн 18-мĕшĕнче тухнă. Халĕ ăна каллех йысамала. Унăн машинĕ çиниче акумуляторăн ĕçлеме пăрахнă. Анчах кун пек хатĕрсем базăри складра çук. Çавăн пекех Батанов машинин подшипникне лайăх йысаман пирки, каллех йысава пăмала пулчĕ.

Çул çинче ĕçе тĕрĕс организацилемен, сдеďшчинă çук. Стахановла ĕçлеме условисене туса памаççĕ. Йысама тытăнсан запаснăй хатĕрсем илес майпа кладовщике шыраса çур кун иртет. Кирлĕ хатĕрсене мастерскойа вăхăтра тăратмаççĕ. Ĕç нормисене, ĕç хакĕсене шофĕрсем патне ситермен. Çакăн пирки ĕç тухăçĕ те пĕчĕк. Автобазăй начальникĕ Йежов ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаст.

Икĕ автомашинă пĕлтĕртеннех ремонтра кĕтсе ларааççĕ. Вĕсен пайĕсене те салатса пĕтернĕ.

Тракторсене йысасси те вăрахан пырат. Халиччен 3 трактортан пĕри çеç йысавлă, ыттисене хăçан йысаса пĕтересси палла мар.

Склад хуçалăхне йăпăхтарса йанă: складсене йысаман, каçхине сторăжсем тăмаççĕ. Кладовщикре ĕлĕкрех кулак пулнăскер Огурцов ĕçлет, савнах завхоз вырăнĕнче те ĕçлеме хушнă.

Базăра пысăк склад тума пур майсем те пур. Икĕ пысăк çурт ахалех ишĕлсе ларать, вĕсем çине ниçкам та пăхмаст.

Складра учотпа отчот ĕçĕ йăпăха кайнипе автобазăри жуликсем усă курнă. Акă механикре ĕçлекенсем (Гогин, Сидоров) сахал мар машини хатĕрĕсене вăрласа сутнă. Кун пек фактсем сахал мар пулнă. Вăрманпромхоз руководителĕсем (Солдатов, Каďаканов) ку фактсем çинчен пĕлнĕ пулсан та нимĕнле мерă та йыщăнмаççĕ.

— Трактороа автомобиль гаражĕсене йысаса пĕтернĕ, хĕллене хатĕрленсе ситнĕ,—тесе сведенисем парат Йежов начальник. Тĕрĕссипи, акă мĕн куратпăр: трактор йысамали гаража кĕмели çула халĕ те йысаман, çăмăр çусан кунта çур метр пыļăк тулат. Шофĕрсен хватерĕсене йысаса пĕтермен, хватерсене пур йĕнчен те çил вĕрет. Çăвăнмали çурт тума укçа та, оборудовăнисем те панă. Анчах никам та ăна тăвасшăн мар. Рядно виçĕ уйăх ĕçлемесĕр ларат. Кунта лайăх ĕçлекен рабочисене Леонтйев, Бударин, Васильев шофĕрсене пулăшса пымаççĕ.

Алексейев.

Суйлав умĕн

ТРАК. Суту-илу организацисем суйлав кампанине хатĕрленеççĕ. Кашни суйлав участкинче буфетпа ларăк тăваççĕ. Кашни колхозра суйлав кампани çинчен çырăлă литературăпа сутакансем уйăрнă. Нойабĕрĕн 2-мĕш кунĕнче 33 суйлав участкисем валăри тĕрлĕрен тавăрсем салатнă. Закамский.

Ялăнсем умĕнче

Çĕрпу районĕнчи Питĕр йăлепчи трахпункт кăтартăнă ситсе те нимĕн туни те палăрмаст. Трахсестра Йемелйанова трахпункта пырса та курăнмаст. Имелевăри трахсестра Андрйанова Ф. (Шăхасан р.) кăçал мĕн пурĕ те трахпункта 3—4 хут çеç пырса курăнна. Колхозниксем трахом чирĕнчен сывалаçăн кашни кулленех трахпункта çÿреççĕ. Весем кĕтсе лараççĕ те, ахалех трухă утаççĕ. Кунта йалсовечĕ трахома пĕтерессипе нимĕн те тумаст.

Шăхасан районĕнчи сывлăх пайĕн пуçлăхĕ Самелйев трахработниксене йертсе пымаст. Вăл хăшпĕр трахпунктсене вĕсем уçăлнăран вара пулман.

Хăшпĕр вырансенче трахомработниксем ĕçлесшĕн тăрăшаççĕ. Анчах вĕсене районри сывлăх пайĕне йалсоветĕсем пачах манса кайаççĕ.

Канаш районĕнчи Кив Шелттем йалсовет председателĕ трахпункт вăлăри емелсем илме укçа памаст. Трахсестра Захарова хăйĕн укçипе емелсем илнĕ, йалсовет пĕр пус та укçа тÿлемен. Кун çинчен Захарова районти сывлăх пайне пĕлтерне те, ăна йалсовет председателĕ темтепĕр каласа йăтласа ĕçрен каларассине хăратнă.

Обыкăвă боďниципчи (Хĕрле Чутăй р.) Тайков тухтăр трахом чирĕнчен сыватассине чăрмантарма тăрăшнă.

Вăл „Трахома медный купороспа тата кăвак чулпа пĕтерме май çук" тесе кăшкăрнă. Трахома çĕçĕне хырса такса вазелин сĕрсен çеç пĕтерме пулат, тенĕ.

Тайков врач трахома пĕтерессине хирĕç пыни вăл, халăх ташманесен ĕçне туни çеç пулат. Совет гражданинĕ çине сталинла тимлĕхпе пăхасси, кашни гражданина пысăк тухăçла, ĕçе йÿрăхла тавасси—медицина работникесен чи пысăк задачи пулат.

Н. Михейев.

Трахом чирне пĕтерессишĕн

Иртнĕ çулта Чăваш республикинчи медицина работникĕсен канăшлăвĕ пулса иртрĕ. Çак канашлу медицина работникĕсем умне пысăк задача кăларса тăратрĕ. Унтанпа лайăх ĕçлекен трахом работникĕсем чылай ÿсĕмсем тÿреç.

Анат Вăрман йăлепчи (Шăхасан р.) трахом пункти республикăри палла трахпунктсенчи перйĕе шутланса тарат. Кунта ĕçлекен сестра Миронова Фекла ĕçе тинĕслипех организациленĕ. Унăн трахпунктин урайĕсем сăрла, таса. Стенасем çумĕнче тĕрлĕрен плакатсемпе çÿлпуççем портречĕсем çакăнса тăраççĕ.

Ку трахпункт çумне Анат Вăрман йăлепе çÿлти Вăрман йăлепе пĕрлештерне. Çаканта трахпункт уçăлаччен икĕ йăлта трахомăпсем пурĕ 405 çын пулна. Халĕ Миронова тăрăшса ĕçленине 300 çын ытла трахомран сыватнă. Кунсăр пуçне 3-мĕшпе 2-мĕш стадисенчен сыватса 1-мĕш стадине куçарна. Кусене те çенĕ çула кĕричен сывлăтасси тăрăшат. Çапла вара Анат Вăрманăн çÿлти Вăрман йăлепе çĕнĕ çула трахом чирне пĕтерсе кĕтсе илет.

Миронова йулташ трахпункта пырăнманнисем патне кулеспе кайса пулашу парат. Вăл колхозниксен килĕсене таса та куļтурăлă тытассишĕн тăрăшат. Колхозницасене катартусем парат.

Çавнашкалах Шекĕртти трахсестра Йăконлева та лайăх ĕçлет. Вăл кăçалхине трахсестрара 3 çын ĕçлет ĕнтĕ. Кунта 268 çын трахомла пулнă пулсан, вăл пĕтĕмпех сыватнă. Йăконлевана лайăх ĕçленĕшĕн икĕ хутчен 100 шер тенкĕ укçа парне премиленĕ. Ухманти трахпунктра ĕçлекен Василйев И. пĕтĕмпе 567 сына трахомран сыватнă.

Анчах çавăнпа пĕрлех трахомран сыватас ĕçпе интереслемен трахработниксем те çук мар-ха.

Çĕрпу районĕнчи Питĕр йăлепчи трахпункт кăтартăнă ситсе те нимĕн туни те палăрмаст. Трахсестра Йемелйанова трахпункта пырса та курăнмаст. Имелевăри трахсестра Андрйанова Ф. (Шăхасан р.) кăçал мĕн пурĕ те трахпункта 3—4 хут çеç пырса курăнна. Колхозниксем трахом чирĕнчен сывалаçăн кашни кулленех трахпункта çÿреççĕ. Весем кĕтсе лараççĕ те, ахалех трухă утаççĕ. Кунта йалсовечĕ трахома пĕтерессипе нимĕн те тумаст.

Шăхасан районĕнчи сывлăх пайĕн пуçлăхĕ Самелйев трахработниксене йертсе пымаст. Вăл хăшпĕр

„Росснабфильм" трестăн Чăваш кантурĕ

Чăваш АСС Республикинчи кино-театрсен экранĕ çинче кăларать:

Саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм

За Советскую Родину

Ленин ордĕнлĕ Ленинградри „Ленфильм" кино-студийĕ тунă. Сценари Геннадий Фиш тата Ю. тата Р. Музыкант тăвансен.

Саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм

Дума про козака Голоту

А. Гайдар „РВС" повеçĕ тăрăх „Союздетфильм" киностудийĕ тунă. Сценари автăрĕ тата режиссор—И. Савченко.

2—2.

Саккăрмĕш номерлĕ
КАПКАН
пичетрен тухрĕ.
Çак кунсенче подписчиксем патне саланаť. Çитес-уйăхсемшĕн çырăнса илме васкăр.

Йĕпрĕрти „Спотара" заводĕнче
1. *Аслă бухгалтĕр заместительĕ*
2. *Счетовод-картотетчик*
КИРЛĔ.
Адрес: Йĕпрĕç, „Спотара" завочĕ.

Сÿктерти ертеле
Столярсем кирлĕ.
Хватер пур.
ПРАВЛЕНИ.

Шупашкарти Тир-сăран заводĕнче
1. Электро-монтер кирлĕ
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.
2. Бухгалтăр-калькулятăр, сăранатă-пушмак производствине пĕлекен КИРЛĔ.
2—2. Дирекци.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелă хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Хысăкрайăсене кайăка панăçĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 848. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 2370 Тираж 13964 58—92 см. 1—1 п. л.